**Кай, кай Ивана!**

Кай, кай Ивана!
Ма каймастăн Ивана?
Унтан лайăх пуян каччă
Урăх тупаймастăн.

Сарă кайăк ма пултăм,
Турат çине ма лартăм?
Анне мана кайăк тесе
Ивана сутасшăн.

Кай, кай темесен те
Хам та кайма пĕлетĕп,
Мана савать, мана илет
Ялти комсомолец.

Шуçăм çути килнĕ чух
Саркайăксем юрлаççĕ,
Çĕнĕ пурнăç тунă чух
Акă çапла калаççĕ:

Комсомолец Хĕветĕр,
Чунăм савнă Хĕветĕр,
Анне, çавнах каятăп,
Чунăм çавнах юратать.

1925

*Ваçанкка, Н. Кай, кай Ивана! / Н. Ваçанкка // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 127.*